Пĕчĕк çеç çак çурта –
Вăрманти тус-юлташ;
Çутатать ман çурта,
Килекен, ан аташ!

Чӳрече тĕлĕнче –
Ĕмĕрхи ват юман.
Пĕшкĕнсе, тĕлĕнсе
Тинкерет кантăкран.

Юрататъ-ши çаплах
Сар çурта этеме
Е темрен ытларах
Курайmасть тĕттĕме?

Хăйĕн шур кĕпине
Парнелет пӳлĕме.
Пуç сĕлтет ман енне.
Тен, ыйтать тӳлеме?

Çук, каласшăн вăл: «Çун,
Хĕвеле пулăшсам!
Тĕксĕмленĕ çĕн кун,
Чун çути пулмасан».

ХАКЛАВ

# «Йăлтах пĕлсе тыткаласан тĕнче пулмасть ыйткалакан»

Çак икĕ йĕркене Василий Кервенĕн «Çынсем» кĕнекинчен илсе хамăн шухăш-кăмăла аталантармалли никĕс пултăр терĕм. Чăнах та, ăна вуланăçем темĕн чухлĕ афоризмла йĕркесем тупма пулать. Хăйĕн хайлавне автор «сăвăлла роман-эссе» тесе çирĕплетнĕ. Ку кĕнеке 1991 çулта пичетленсе тухнă. Ун çинчен рецензисемпе статьясем пулнă-и е çук-и – асăрхаман. «Çынсем» хайлав пирки хăшĕ-пĕри сăмах вĕççĕн ырласа калаçнине илтнĕ-ха. И.Чермаков поэт пысăк тĕпчев ĕçех çырасшăн пулнă та, шел, ĕлкĕреймерĕ.

Ку кĕнеке, паллах, пĕр-пĕр çивĕч сюжетлă детектив тата юратупа тыткăна илекен «Декамерон» та мар. Анчах, тимлĕ куçпа вуласа тухсан, çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума май килет: «этемлĕх детективĕ» пытанса тăмасть-и ку кĕнекере? Ахальтен мар авторĕ кĕнеке пуçламăшĕнчех вулакан енне çавăрăнса «Онегин строфипе» çапла асăрхаттарать: «Çĕр каçиччен çĕр тĕрлĕ шухăш» иккен «тертлĕ Çĕр çинче», унтан сăлтавне ăнлантарать:

*Тен, çамрăк пуçăм питĕ шухă*
*Е чун-чĕрем чул хуçшинче?*

Юлашкинчен çапла каласа хурать:

*Анчах та ман «тĕне» кĕме*
*Пĕлес пулать кĕнекеме...*

Çакăнта ĕнтĕ пĕтĕм вăрттăнлăх. Мĕнешкел «тĕн» çинчен шахвăртса калать-ха автор? Ку кĕнекене çырнă вăхăт икĕ вăй тытăçăвĕ тапранса кайнă саманапа çыхăнуллă: çĕр тĕрлĕ шухăш вылявĕпе урмăшса кайнă Раççей демократи шырама пуçланă, коммунизм идейисем сӳнсе-шупкалса пынă, хĕрлĕ ялав тĕссĕрленнĕ, хăйĕн мухтавне çухатнă. Йывăр вăхăт, кисренӳллĕ вăхăт. Ку тапхăрта Василий Кервен хăйĕн шухăшлавĕн утравне куçса каять. Ăс-хал Робинзонĕ пулса тăрать, пĕтĕмлетӳллĕ йĕркесем шырать. Çакна «Ят» сыпăкрах сиссе илме пулать.

*Çĕрле утаттăм талпăнса.*
*Пуç тĕлĕнчех пĕр йăлтăр-йăлтăр*
*Ыйту палли пек çаврăнса*
*Сасартăк сӳнчĕ çутă çăлтăр.*

Çакнашкал символла йĕркесенчен сиксе тухать те ĕнтĕ пĕр пĕтĕмĕшле драма. Идея çăлтăрĕ

«ыйту палли пек çаврăнса сасартăк сӳнни» çынсен нумай-нумай йышне сехĕрлентерсе янă, теприсен ăс-пуçне çĕнĕ шанчăксемпе ăшăтса малалла утма хевтелетнĕ, шухăшлаттарнă:

*Кам эсĕ çакă Çĕр çинче,*
*Хăвна «хуçа» текен тăванăм?*
*Тăратăн пурнăç хĕрринче*
*Е мал енне кĕпер хыватăн?*

Анчах та чи кирли мĕн-ши çĕнĕ талпăну çулĕпе утакан çыншăн? Автор çапла хуравлать:

Ятна ямастăн-и? Упра,
Вăл пултăр сутăнми тупра.

Ку икĕ йĕркере автор романтизм варкăшĕпе уçăлтарать-ха хăйĕн шухăш-кăмăлне. Пĕлетпĕр ĕнтĕ: политика çул-йĕрне суйласа илнĕ çынсем çак икĕ йĕркене питех пăхăнмаççĕ. Кĕнеке авторĕ хăех çапла хуравласа хурать:

*Çак шухăш çул тăрăшшĕпех*
*Пуçран пĕр чĕптĕм те тухмарĕ.*
*Инçе утса ĕшеннипе*
*Такăнтарать тымар тумхахĕ.*
*Пĕр урараң иртмест тепри,*
*Халь йĕп те йывăр çав тери.*

Сăнарлă шухăш! Йĕп йывăрăшне те туйма пултаракан чĕлхе ăсти хăйĕн «Çынсем» хайлавне те ăспуççăр, ытахальлĕн никĕслемен. Автор «Ят» сыпăкра çакнашкал чăнлăха уçса парать:

*Тĕнче вăл – тăрăлми пăтрав:*
*Хура та шурă – тытăм пĕтĕм.*
*Этемлĕх ăсĕнче те ав*
*Çăтмах – çап-çутă, тамăк – тĕттĕм.*
*Çумлах – виçесĕр хирĕçӳ,*
*Вĕсемсĕр – каçĕ-ирĕ çук.*

Тахçан авал Сервантес çапла каланă: «Канса пурăничен ĕç туни лайăхрах». Василий Кервен хăйĕн шухăшлавлă çаврăмĕсемпе канса лармасть. Вăл шухăшлать, пĕтĕмлетӳсем тăвать.

*Чеелĕх вăйлă япала,*
*Анчах вăл пӳтсĕрлĕх тăванĕ.*
*Тултан таса, шалтан хура,*
*Пит вăрттăн çеç хурать ура.*

Василий Кервен çырнă «Çынсем» роман-эссе 11 сыпăкран тăрать. Онегин строфипе кĕвĕлесе каланă «Вулакана» ятлă 14 йĕркерех автор хăйне канăç паман ĕмĕр ыйтăвĕсем «Çĕр каçиччен çĕр тĕрлĕ шухăш Телейлĕ, тертлĕ Çĕр çинче» тесе асăрхаттарать пулсан, унăн сăлтавне те çапла ăнлантарать: «Е чун-чĕрем чул хушшинче». Самана йывăрăшĕ, тĕрлĕ хирĕç тăрăва пула сиксе тухнă тĕнче тăвăрлăхĕ Василий Кервенĕн тĕпчевлĕ пĕтĕмлетĕвĕсенче уççăн палăрать.

Ав, «çын» та хăш-пĕр халăхсен
«Чун» сăмахпа тăванлă теççĕ.
Халь иккĕшĕ те – тăлăхсем,
Пĕрне-пĕри час-час пĕлмеççĕ.
Чул чĕрепе пурнать-ха тем
Çак Çĕр çинче чылай этем.

Кун пирки çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчех Испанин чаплă философĕ Хосе Ортега-и-Гассет çапла каланă: «Достаточно обратить внимание на энергию, решительность и беззастенчивость, с которой сегодня шагает по жизни каждый, стремясь навязать свое мнение, стараясь урвать побольше удовольствий».

Пĕтĕмлетсе каласан, Василий Кервен поэтăн «Çынсем» кĕнекене сăвăлласа çырнă философи трактачĕ теме пулать.

*Инкек ялавĕ – мухтавра.*
*Виçелĕх кирлĕ те, туятăр,*
*Хăпма пĕлмесĕр, ЯТ таврa*
*Çӳретĕп-ха çаплах, ан ятлăр.*
*Вăл, ман шутпа, халь ытларах*
*Чаппа çураçрĕ, тур çырлах.*

Испани философĕ Хосе Ортега-и-Гассет та, чăваш ăсчахĕ Василий Кервен те пĕр шухăш патне çитсе тухаççĕ. Ăслăлăхсăр пурăнасшăн мар чăваш çыравçи. Тĕпчет, сăнарлă пĕтĕмлетӳсемпе шухăш тĕллевне шырать.

«Шăпа» сыпăкра çакнашкал йĕркесем пур:

*«Чăн çын» тени пулать капла*
*Çак халăх ячĕ-шывĕ «айну».*
*Çӳренĕ вăл хăш çулпала,*
*Мĕне ĕненнĕ те пуç тайнă?*
*Çĕр чапĕ – пĕтĕм халăхах,*
*Никам ан юлтăр тăлăха.*

Ырă кăмăллă автор халăхсен тĕрлĕ йышне хисеплесе «çĕр чапĕ – пĕтĕм халăхах» тет пулин те, анчах хăйĕн пăшăрханăвне пытараймасть:

*Кĕрнеклĕ айнусен вара*
*Çар мар иккен –*
*пăлхавлă ушкăн.*
*Аллисенче пĕр вĕçĕмрен*
*Мĕнпурĕ – сăнă та çĕмрен.*
*Туртса илмешкĕн çĕрсене*
*Вĕсем тискеррĕн шутламан та:*
*Чура тăвасшăн «ютсене» –*
*«Темскер-мĕскер» ăсталаман-тăр.*
*Тĕрмешнĕ пулăпа, тепре*
*Çĕр ĕçĕ пулнă хисепре.*

Айнусенче чăваш çыннин сăнарĕ сисĕнет. Çак ытарлă чĕлхепе çырнă хайлав ытларах Японин çĕрĕ çинчи пулăмсен пĕлтерĕшĕпе çыхăннă пек юптарса çырать автор. Ку вăл авторăн меслечĕ, шухăшлав шыравĕ. «Пожалуйста, не удивляйтесь этому неожиданному отклонению от темы. Чтобы набросать портрет современного человека-массы, который, сохраняя все прежние характеристики людей своего типа, стремится в наше время занять место среди избранных, следует обратить внимание на то, что его отличает от двух «чистых» типов людей, которые, смешавшись, порождают столь «мутное» существо: от обычного, известного истории и ранее «человека-массы» и от истинно благородного, сильного духом человека», – аса килет Хосе Ортега-и-Гассет сăмахĕ. Акă тепĕр пĕтĕмлетӳллĕ çаврăм:

*Этем! Тинкер-ха таврана,*
*Мĕнле черченкĕ çут çанталăк?!*
*Илем каять е таврăнать,*
*Санран килет: касатăн алăк*
*Е вилĕм, е кун-çул валли.*
*Çапла – çын чунĕпе алли!*

Çакнашкал асăрхаттарусăлтавсăр кĕвĕленсе тухман, паллах.

*Сăл куççене йăлт типĕтсе*
*Ярсан, мĕскер кĕтет – ку паллă:*
*Лараççĕ çырмасем пĕтсе,*
*Çĕршыв пулать усал шăпаллă,*
*Халăхсемпе те çавăн пек*
*Эгемлĕхшĕн кашни тĕрек.*

Этемлĕх шăпи çинчен пăшăрханса шухăшлакан Василий Кервенĕн «чун çырăвĕ» чăннипех те хăйне евĕрлĕ, паянхи кăткăс кунсемшĕн те асăрхаттаруллă:

*...Аслашшĕсем камне те халь*
*Астăвакан çынсем сахал.*

Çапла. «Ырă ĕçсем усал вăйсене хускатса яраççĕ, усал вăйсем вара ырри çинчен шутлаттараççĕ». Ку вăл Шекспир çаврăмĕ. Анчах «Çынсем» роман-эссе авторĕ ку ыйтăва хăйĕн тавра курăмĕпе çĕнĕлле тĕнче курăмпа хуравлама тăрăшать.

*Сурхи шыв евĕр юхнăçем*
*Çак вăхăт тăрăлса тасалĕ.*
*Кăра, хăватлă туйăмсем*
*Манми Тăван çĕршывшăн халĕ*
*Чунра капланнă чух – ăна*
*Хăвармĕ халăх чухăна.*

Ĕненетпĕр: мĕншĕн тесен ĕненес килет. «Произведение искусства открывает нам тайну жизни и бытия», – тет Хосе Ортега-и-Гассет. Çакна Василий Кервен çаврăмĕсенче лайăх сисме пулать. Ахальтен мар автор кĕнекин «Çынлăх çилĕ» ятлă юлашки çаврăмĕнче çапла тĕвĕлесе хурать:

*Виçесĕр вăрăм вăхăта*
*Шап-шур пир пек ума хуратăп,*
*Шăн манăçа хĕм кăкăрта*
*Ирĕлтерсе унпа çыратăп:*
*Туйма ИЛЕМ сăн-сăпатне,*
*Этемлĕх, таврăн çын патне!*

Автор «Илем» тенипех çырлахмасть, вăл унăн «сăн-сăпатне» шырать. Вăл унăн пĕлтерĕшне курать.

Шел пулин те, хальхи вӑхӑтра илем пӗлтерӗшӗ пирки шухӑшлакансем сахалтарах. Илемре ҫынлӑх, килӗшӳлӗх, тараватлӑх. Ҫавна ӗнентерет пире Василий Кервен.

Пурнӑҫ пулӑмӗсем этемлӗхре пӗрмаях улшӑнса пыраҫҫӗ. Цивилизаци пуҫ пулса пынӑҫем этем ӑсхакӑлӗ те улшӑнса пырать. Анчах кирек мӗнле тӗреклӗ этем те ӗмӗр иртнӗҫем йӑшса пырать. Ҫӗнӗ ӳсӗм сиксе тухать. Апла пулин те самана проблемисем ҫав-ҫавах тӑрса юлаҫҫӗ. Куллен-кунхи комфортшӑн этем вӑйне-халне ҫухатса, сусӑрланса ӗҫлет. Мӗнех-ши пит улшӑнать вара?

*Нимех те вӑхӑта чармасть:*
*Хам хыҫҫӑн та ман иртнӗ ӗмӗр*
*Вӗҫсӗрлӗхе пӗрмай чӑмать,*
*Ҫӗре ӳт-пӗвӗмпе вӑл кӗмӗ.*
*Ят юлмасан та, пурпӗрех*
*Упранӗ лайӑх, чиперех.*

Кунашкал ыйту аслӑ акӑлчан поэтне тата драматургне Уильям Шекспире те пӑлхантарнӑ. Акӑ мӗнле йӗркесемпе уҫса парать вӑл ӗмӗр чӑнлӑхӗ ҫинчен хӑйӗн 64-мӗш сонетӗнче:

*Куратӑп: Вӑхӑт улшӑнать.*
*Ӑҫта иртнин ӗлкенӗ? –*
*Таптаннӑ чапӗ те ҫиҫмест.*
*Вӑл тупӑкра ҫӗрет.*
*Мӑнаҫлӑ, ҫӳлӗ керменсем*
*ав ишӗлсе тӗпреннӗ:*
*Чулсем те Вӑхӑт чурисем –*
*йӑлт сӳсленет, пӗтет.*

Василий Кервен хӑйӗн философиллӗ ҫаврӑмӗсене 1981, 1984, 1990 ҫулсенче ҫырнӑ пулин те паянхи этемлӗх тӗнчин кӑткӑслӑхне курма пӗлнӗ. Япони пирки акӑ еплерех ҫырать вӑл:

*Ҫӗршывӗн техники малта,*
*Йӑлт электроника иленчӗ –*
*Ӑсталӗ юрӑ робот та,*
*Анчах, ав, кӗвӗ инструменчӗ*
*Хӑйне манерлӗ халӑха*
*Авалхиллех пулни паха.*

Автор ҫакна та асӑрхаттарать:

*Кӑштах вӗрентӗрччӗ унран*
*Совет Союзӗнчи чинуша.*
*Вӑл пур «хура ӗҫрен» упрать*
*Тӑрлавсӑр ачине. Пуш-пушӑ*
*Тӑванӗ те ҫумнех тымар*
*Ярать: ку намӑс – уншӑн мар.*

Асӑрхаттартӑмӑр ӗнтӗ, авторӗ хӑйӗн хайлавне 1981 ҫултах ҫырма пуҫланӑ, хамӑр ҫӗршыва инкек кӗтессе сиснӗ тейӗн вӑл. Ак епле йӗркесем сиксе тухаҫҫӗ:

*Эпир ав пирӗн хӗр упраҫ*
*Чи сӑпайли тесе мухтаннӑ*
*Саманара сисмен, ара,*
*Мораль хӑрах енчен варланнӑ:*
*Хӑшсем, курсан ют укҫана,*
*Ӳтне сутаҫҫӗ уҫҫӑнах.*

Шел пулин те, Совет Союзӗ арканнӑ хыҫҫӑн ҫав ирсӗрлӗх тата вӑйланса кайрӗ.

Ирӗксӗрех Шекспир йӗркисем патне таврӑнас килет:

*Хӑратӑп халсӑр шухӑшран,*
*йӗретӗп татӑлса,*
*Юратура чун телейне*
*кам хӑварать ҫӑлса?*

Василий Кервене, юратӑва ҫивӗч туякан, анлӑн куракан поэта, сутӑ сывлӑм тата ҫӑл куҫӑн пӑчӑртанса тухакан тумламӗсем пурнӑҫа ҫуратакан Ҫӗр-аннен куҫҫулӗсем пекех туйӑнаҫҫӗ.

*Эпир йӑлтах ун ачисем –*
*Усаллисем те ыррисем, –*

тет вӑл. Малалла ҫакна аса илтерет:

*Ыратнӑ чух кӗтсен ырра*
*Асапланас килмест усалшӑн...*

Николай ТЕВЕТКЕЛ,
ЧР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ